# Чĕрчун тĕнчине лайăхлатма – ятарлă пай

*«Хыпар» ыйтăвĕсене республикăн çутçанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕн заместителĕ Владимир Николаевич КУЗЮКОВ хуравлать.*

**– Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пĕлтĕр ЧР Сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх службине пĕтерме, унăн тивĕçне Çутçанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствине пама йышăнчĕ. Вăрман, уй-хир, шыв-шур чĕрлĕхĕпе çыхăннă ыйтусемпе ĕçлеме унта мĕнле тытăм йĕркелерĕр?**

– Чĕрчун тĕнчине, вăл пурăнакан вырăна хӳтĕлекен, тĕрĕслекен тата чĕрлĕхпе усă курассине йĕркелекен пай. Унăн тĕллевĕсем тытăм ятĕнчен тухса тăраççĕ. Вăл министерствăрах /Шупашкар хули, Ленинград урамĕ, 33/. Ăна Николай Николаевич Косулин ертсе пырать. Хальлĕхе пайра иккĕн: маларах службăра вăй хунăскерсем. Çакăнпа пĕрлех темиçе çынна унта ĕçе илме конкурс ирттересси çинчен пĕлтертĕмĕр. Чĕрчун тĕнчине, вăл пурăнакан вырăна хӳтĕлес, тĕрĕслес тата чĕрлĕхпе усă курас ĕç кураторĕ пулма мана шанчĕç.

**– Министерствăна пăхăнакан çутçанталăкăн уйрăмах сыхлакан территорийĕсен дирекцийĕнче те – пысăк улшăну. Унпа паллаштараймăр-и?**

– Министрсен Кабинечĕн 2015 çулхи чӳк уйăхĕн 25-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн «Чăваш Республикинчи çутçанталăкăн уйрăмах сыхлакан территорийĕсен дирекцийĕ» хысна учрежденийĕнчен «Чĕрчун тĕнчине хӳтĕлессипе, унпа усă курассипе, çутçанталăкăн уйрăмах сыхлакан территорийĕсемпе ĕçлекен дирекцийĕ» хысна учрежденийĕ тунă. Унăн тĕллевĕ те учреждени ятĕнчен тухса тăрать. Штатĕнче 20-ĕн: Сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх службинче тата Çутçанталăкăн уйрăмах сыхлакан дирекцийĕнче тăрăшнисем. Дирекци /Шупашкар хули, Мир проспекчĕ, 2/ ертӳçин тивĕçне биологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ Геннадий Николаевич Исаков пурнăçлать.

**– Чĕрчун тĕнчине, вăл пурăнакан вырăна хӳтĕлекен, чĕрлĕхпе усă курассине йĕркелекен инспекторсене сахаллатнă теççĕ. Миçе хăварнă?**

– Чăн та, йыш пĕчĕкленчĕ. Кашни икĕ районшăн яваплă пулма пĕр инспектора çирĕплетрĕмĕр. Республикăн ĕç тăвакан влаç органĕсене тытса тăма хысна укçипе перекетлĕрех усă курас тĕллевпе штата чакарнă.

**– Фаунăпа флорăна хӳтĕлессишĕн çĕнĕ дирекци мĕнле ĕçсем тума палăртать? Сыхлакан лаптăксен хисепне ӳстерме палăртмастăр-и?**

– Республикăн пысăк мар территорийĕнче вĕсем самаях: федерацин – 2 /«Сăрçум» заповедник /9,2 пин га/ тата «Чăваш вăрманĕ» наци паркĕ /25,2 пин га/; республикăпа район-хулан – 58.

Сыхлакан лаптăксем çутçанталăка хӳтĕлес ĕçри тавралăха хӳтĕлемелли тухăçлă май пулса тăраççĕ. Общественноç экологин çивĕч ыйтăвĕсене çĕклетĕр тесе Раççей Çутçанталăк ресурсĕсен тата экологи министерстви 2017 çулта çутçанталăкăн уйрăмах сыхлакан территорийĕсен çулталăкне ирттерме сĕнчĕ. Раççей Президенчĕ сĕнĕве ырласа йышăнчĕ. Çулталăк Раççей тата регионсен аталанăвĕнче уйрăмах сыхлакан лаптăксен пĕлтерĕшне ӳстерме пулăшасса шанатпăр. Республика программисемпе килĕшӳллĕн çав территорие çуллен пĕрререн сахал мар туса хутăмăр.

**– Чăваш Енре хăшпĕр чĕрчун пĕтес патнех çитнĕ. Вĕсене  хӳтĕлесе мĕн тăватăр?**

– Çапла, сахал йышлисем пур. Сăмахран, çӳлевĕç, юс, пăсара. Вĕсене республикăн Хĕрлĕ кĕнекине кĕртнĕ: вĕлерме, суранлатма, хăратма юрамасть. Министерство хальхи биотĕрлĕлĕхе упраса хăварассишĕн тата хушассишĕн, чĕрлĕх килес ăрăва та савăнтартăр тесе тăрăшать.

**– Республикăн Арбитраж сучĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн арендаторсенчен туртса илнĕ миçе сунар лаптăкне пĕлтĕр çĕнĕрен валеçнĕ?**

– 13-шне. Тара пама аукциона 17 тăратнăччĕ. 4-шĕ чи нумай укçа хывассине пĕлтерсе çĕнтерчĕ пулин те кайран службăпа килĕшӳ тумарĕ. Юлнисене тара пама кăçал аукцион ирттеретпĕр.

**– Çĕнĕ арендаторсен умне мĕнле тĕллев лартатăр?**

– Хăйсене шанса панă лаптăксенчи сунар ресурсне чухăнлатмалла мар, чĕрчунсен йышне ӳстермелле, вĕсемпе перекетлĕ усă курмалла.

**– «Сунарçăсем нумай чухне – браконьерсем, чĕрчун тĕнчине чухăнлатаççĕ», – тени чăнлăхпа килĕшсе тăрать-и?**

– Тĕрĕс мар калаççĕ. Пăшал çакса уй-вăрманта çӳрекен кашни сунарçă браконьер мар. Унăн саккунра пăхнă документсем пурте пулсан, сунара министерство палăртнă вăхăтра çӳресен, сунарта усă курмалли хатĕрсемпе тата ирĕк панă чухлĕ çеç кайăк тытсан браконьер теме юрамасть. Саккуна пăхăнакан акарçăсем сунар ресурсне пĕчĕклетме витĕм кӳреймеççĕ.

**Юрий МИХАЙЛОВ калаçнă**